Шупашкар район хаçачĕ ✵ 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ТĂВАН ЕН

62 (9204) № ✵ 2006 çулхи июнĕн (çĕртме уйăхĕн) 7-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

✵ Акатуйĕнче

## ÇĔНĔ ÇĂКĂР ВАЛЛИ НИКĔС ПУР

**Тахçан илтнĕ пĕр сăвăри «Тинех ĕçсем вĕçленчĕç» йĕркесем аса килчĕç çурхи ĕçсене пĕтĕмлетнĕ май, çапах çук, калаймăпăр апла. Ял хуçалăхĕнче, кирек епле производствăри пекех, ĕç вĕçĕ-хĕррисĕр. Анчах çĕнĕ тырăран çĕнĕ çăкăр тума никĕс хывнă - кун пирки иккĕленмĕпĕр.**

### КУН ПЕК ХĂНА КАШНИ КУН МАР

Тыр-пулăн кашни пĕрчи хура тăпра ăшне хывăнса тухăç патăр тесе ырми-канми тăрăшакансене, шуçăмпа ĕçе пуçăнса хĕвел ансан киле кĕрекенсене, ял хуçалăхне чунне парăннисене халалланă уяв районта эрне кун, июнĕн 2-мĕшĕнче, иртрĕ. Ку кун ытти çулсенчинчен пысăк хăна, республика Президенчĕ Н.В.федоров, килнипе те асра юлĕ. Ара, Чăваш Ен ертӳçи кашни кунах районта пулмасть-çке тата вăл пур район Акатуйне çитеймест. Çавăнпа пушшех мăнаçланма пултарĕ районти хресчен.

«Тăван районăмра пурăнакансем, пытарам мар, мана çак уçланкăра пулма питĕ-питĕ кăмăллă», - уява пуçтарăннисен умĕнче çапла уларĕ Президент. Хăйне мĕн астунăран варах çав уçланкăри Акатуй уявне Миснер ялĕнчен 7 çухрăм çуран утнине аса илчĕ. Район халăхне вара вăл хăйĕн сăмахĕнче «Тавах сире эсир малтанхиллех юлнишĕн тата лайăхланнишĕн,» - тесе тав тунă май хресчен пурнăçĕ çăмăл маррине палăртрĕ. Усă курмасăр выртнă пин



✵ Район ертӳçи А.Князев доклад тăвать.

ытла гектар çĕре кăçалтан районта çаврăнăша кĕртме пултарнине те палăртрĕ Николай Васильевич.

### ПАРНЕСЕМ - ПРЕЗИДЕНТ АЛЛИНЧЕН

Хăйĕн саламлă сăмахне вĕçлесен вăл производствăра малта пыракансене чыслама пуçларĕ. Чи пысăк награда, паллах, тивĕçлĕ хисеп, «Чăваш бройлерĕ» акционерсен уçă обществин директорне В.И.Николаева тивĕçрĕ. Ăна «РФ Ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă. Район администрацийĕн бухгалтер учечĕн пайĕн пуçлăхĕ - райадминистрацин тĕп бухгалтерĕ А.М.Хромова РФ Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотиллĕ пулса тăчĕ. Республика шайĕнчи наградăсем те пулчĕç. ЧР Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе районти пилĕк çынна чысларĕç. Вĕсен шутĕнче - «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕнчи ЮП. Мижиков водитель, «Чăваш бройлерĕ» акционерсен обществинчи А.В.Омарова рабочи, райадминистрацин ял хуçалăх пайĕн тĕп зоотехникĕ С.Н.Мясникова, Ленин ячĕллĕ колхозри А.С.Майков механизатор, «Букет Чувашии» агрофирмăн Ишлейри филиалĕнчи Ю.Г.Романов механизатор.

Яллă вырăнта пурăнакансене тата ĕçлекенсене патшалăх енчен пулăшу панипе районти чылай çемье усă курма ĕлкĕрчĕ. Акатуйра çавăн валли свидетельство тата тепĕр тăвата çынна лекрĕ. Хальхинче «Прогресс» АХОри склад заведующине А.В.Тимофеева, шкул çулне çитменнисен «Хĕвел» вĕренӳ учрежденийĕн поварне Е.Г. Матвеевана, Шăнкасри фельдшерпа акушер

(Малалли 2-мĕш страницăра.)

## СОЦИАЛЛĂ ПУЛĂШУ ПИТĔ КИРЛĔ

**2001 çултан июнĕн 8-мĕшне Раççейре Соцĕçченсен кунĕ тесе паллă тăваççĕ. Çак куна ахальтен суйламан. Шăпах июнĕн 8-мĕшĕнче 1701 çулта пĕрремĕш Петĕр патша ятарлă хушу кăларса социаллă хӳтлĕх системин никĕсне хывнă. Вăл хушнипе чирлисене, ватăсемпе килсĕр чухăнсене пăхса тăма ятарлă çуртсем уçнă.**

Халăха социаллă хӳтлĕх парас сфера аталанса пыракан сектор. Ку отрасльте ĕçлекен çĕр-çĕр специалист граждансен ырлăхĕшĕн тĕрлĕ ыйту татса парать. 40 миллиона яхăн Раççей çынни - пенсионерсем, çĕршыври халăхăн чĕрĕкĕ чи пĕчĕк укçа виçинчен те сахалрах тупăш илет, вăл шутра 25 миллион граждан чухăнлăхра пурăнать. Халăх йывăрлăха кĕрсе ӳкни чи пĕчĕк укçа виçин суммине ытла пĕчĕк тунинчен те килет. Специалистсем шутланă тăрăх, вăл правительство йышăннинчен икĕ хут та пысăкрах. Апла, чи пĕчĕк укçа



виçи чухлĕ тупăш илекенсен хисепĕ официаллă кăтартуран тепĕр икĕ хут нумайрах, çĕршыври кашни виççĕмĕш çемье аран-аран саплашăнса пурăнать. Экономика енчен активлă халăхăн 8 процентĕ чылай çул ĕнтĕ ĕççĕр. Раççей тахçанах ĕçшĕн тӳлессипе начар аталанакан çĕршывсен шайĕнче.

Çавăнпах патшалăх задачи - асăннă категорине кĕрекен граждансене кирек епле пулăшу парасси. Ку енĕпе вăл куçа курăнакан утăмсем тăвать те. Сывлăх сыхлав тата социаллă аталану министерстви çăмăллăхсене монетизаци çине куçарас ыйтăва хытă тимлет. Патшалăхăн социаллă çăмăллăхне илме тивĕç халăха пулăшу парас механизм тĕпрен улшăнчĕ. Граждансем мĕн илессине хăйсем суйлама пултараççĕ. Паян Раççейре федераллă бюджетран 15,56 миллион çын соцпулăшу илет, 26 миллиона яхăн - РФ субъекчĕсен бюджетĕнчен.

Патшалăх мĕнле пулăшма пултарнине кура, вăл çын пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине пăхса хаклаççĕ халăхра. Соцпулăшăва илессипе ытларах пенсионерсем кăсăкланаççĕ.

Патшалăх системинче соцпулăшу паракан 22400 учреждени ĕçлет, 12 миллион çын ун пулăшăвĕпе усă курать. Ку сферăра 500 пине яхăн соцĕçчен, вăл шутра эпир те - Шупашкар районĕнчи халăха социаллă хӳтлĕх паракан уйрăм работникĕсем, тăрăшатпăр. Соцĕçченсем - çын хуйхине ăнланакан çынсем. Ахальтен мар ку органсенче ытларах хĕрарăмсем вăй хураççĕ. Никам та мар, вĕсем çынсен ыйтăвĕпе, тепĕр чух инкекĕпе - пĕччен юлни, ватлăх, чухăнлăх, чир-чĕр - тачă ĕçлеççĕ. Ырă сăмахпа пулăшу парса, усă кӳрсе пурнăç çулĕн утăмĕсене çăмăллатаççĕ, ырă малашлăха шанчăк çуратаççĕ.

Ӳлĕмрен те соцĕçченсен тăрăшăвĕ пысăк профессионализмпа, ăнланулăхпа, хĕрхенӳлĕхпе уйрăлса тăрасса шанатăп. Хул пуççи çине тиеннĕ яваплăх йывăрăшне сиртен пулăшу илекен çынсен тав сăмахĕ çăмăллатса пытăр. Килĕшӳ, сывлăх, тăнăçлăх тата çĕнĕ вăй-хал сире, социаллă ĕçченсем!

**А.КОНСТАНТИНОВ, халăха социаллă хӳтлĕх паракан уйрăм ертӳçи.**

**✵ «Эпир йывăр чухне пулăшма тăрăшатпăр». Социаллă ĕçченсен пĕр ушкăнĕ.**

— *Июнĕн 8-мĕшĕ - социаллă ĕçченсен кунĕ* —

## *Районти социаллă пулăшăвăн хисеплĕ ĕçченĕсем тата çак ĕçре вăй хунă ветерансем!*

***Сире професси уявĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Сирĕн ĕçĕр уйрăмах паянхи кун сумлă та хисеплĕ. Аслă ăрăва тимлесе тăрасси, вăл шутра вăрçăпа ĕç ветеранĕсене, тĕрлĕ сăлтава пула йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ нумай-нумай çемьене пулăшасси - сирĕн тивĕç.***

***Иксĕлми ыркăмăллăхăрпа пултарулăха, сăпайлăхăрпа тавçăрулăха тата чăтăмлăха пула паянхи кун чылай çивĕч ыйтусене татса пама май килчĕ. Вырăнти халăха социаллă пулăшу парас енĕпе район республикăра та лайăх енчен палăрса тăрать.***

***Çăмăл мар вăхăтра умри йывăрлăхсене çĕнсе малалла аталаннинче сирĕн те, социаллă пулăшăвăн ĕçченĕсен, тӳпи пысăк.***

***Ырă ĕçсемшĕн тавах сире пурне те!***

***Уяв ячĕпе кулленхи ĕçре ăнăçупа çитĕнӳ, ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей сунатăп.***

**А.КНЯЗЕВ,**
**Шупашкар районĕн пуçлăхĕ.**

## *ÇАР ÇЫННИСЕМ РАЙОН ЕРТӲÇИНЕ ХАКЛАÇÇĔ*

Пирĕн район производство кăтартăвĕсемпе кăна мар, ытти енпе те республикăра палăрса тăрать. Çакă граждансене çар ретне тăма хатĕрлесси енчен те сисĕнет. Кун пирки районти Акатуйра саламлă сăмах каланă ЧР çар комиссарĕ А.Б.Кухарчук генерал-майор уйрăммăн палăртса хăварчĕ. Вăл каланă тăрăх, пирĕн районти яшсем çар ретне тăма лайăхрах та хатĕр. Çавăншăн республика çар комиссарĕ район ертӳçине А.П.Князева «Çар Вăйĕсене 200 çул» паллăпа чысларĕ.

**В.ЭВЕРККИ.**

✵ Республикăра

## *ПĔРРЕМĔШ АРХИТЕКТОРА ЧЫСЛАНĂ*

**Майăн 31-мĕшĕ.** Шупашкарта, Гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче Чăвашсен ку чухнехи историйĕнчи чапа тухнă çынсенчен пĕри, Санкт-Петербургри «Летний сад» историллĕ палăкăн картине, Эстонири Пярну хулинчи чиркĕве тăваканни Петр Егорович Егоров архитектор çуралнăранпа 275 çул çитнине палăртса асăну касĕ йĕркеленĕ. Унта çак институт хатĕрлесе кăларнă «Архитектор Петр Егоров» кĕнеке презентацийĕ иртнерĕ. Авторĕ Э.Кузнецова, редакторĕ А. Трофимов.

## *АВТОФУРГОН КОМБИНАЧĔ ÇĔКЛЕНЕТ*

**Июнĕн 1-мĕшĕ.** Çĕмĕрлери автофургон комбиначĕ яланах ку хулари чи пысăк та пĕлтерĕшлĕ предприяти пулнă. Вăл мĕнле «сывлани» кунта пурăнакансене те, хулана хăйне те витĕм кӳрсе тăнă. Çавăнпа халь ура çине тăма пуçлани çак тăрăхри çынсемшĕн çутă самант. Автофургонсемпе кузов-контейнерсем тăвасси кăçалхи 5 уйăхра 5,4 хут, ĕç укçи вара 2,4 хут ӳснĕ. Ку ӳсĕмсем ăнсăртран пулманни уйрăмах савăнтарать. Çак кун вăл хăйĕн 75 çуллăх юбилейне паллă тунă. Уяв ячĕпе саламлама вĕсем патне Н.Федоров Президент килнĕ.

## *СПОРТПА ТУСЛИСЕН ĂМĂРТĂВĔ*

**Июнĕн 3-мĕшĕ.** Тĕп хулари «Олимпийский» стадионта Чăваш Ен Президенчĕн парнисемшĕн йăлана кĕнĕ «Спортпа туслă çемье» спорт фестивалĕ иртнĕ. «Сывă пурнăç çеç этеме ырлăх та телей кӳрет» палăртнă унта хутшăнакан çемьесем. 10 районпа (вăл шутра пирĕн те) икĕ хуларан (Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар) пурĕ 30 çемье хутшăннă. Çĕнтерӳçĕсене пурне те асăнмалăх сумлă парнесемпе чысланă.

### Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх

**Юн кун, июнĕн 7-мĕшĕ**
уяр çанталăк,
кăнтăрла +19... +21
çĕрле +12... +14

**Кĕçнерни кун, июнĕн 8-мĕшĕ**
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăнтăрла +20... +22
çĕрле +6... +8

**Эрне кун, июнĕн 9-мĕшĕ**
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк çумăр çусах каймасть,
кăнтăрла +14... +16
çĕрле +7... +9

**Шăмат кун, июнĕн 10-мĕшĕ**
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк
кăштах çумăр çăвать
кăнтăрла +17... +19
çĕрле +10... +12

# А К А Т У Й Ё Н Ч Е

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.)

дипломпа Куйбышев ячĕллĕ, иккĕмĕшлипе Ленин ячĕллĕ, виççĕмĕшлипе «Агросоюз - 21 регион» предприятисене чысларĕç. «Атлашевский» ЯХКна пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсен лаптăкĕсене ӳстернĕшĕн райадминистраци дипломĕпе тата укçан премипе хавхалантарчĕç. Çĕнĕ йышши технологисене пурнăçа кĕртсе пыракан «ЧувашАгроМаркет» компани те уявран пушă алăпа каймарĕ. Вырăнти... Выльăхчĕрлĕхе лайăх хĕл каçарнисенчен Кăрмăшсемпе Апашсене чысларĕç, ĕне-выльăх ĕрчетессипе тухăçлă технологисемпе усă курнăшăн, йышне ӳстернĕшĕн - Чурачăксене. АПКна аталантарасси çинчен калакан приоритетлă наци проектне пурнăçа лайăх кĕртсе пынишĕн Ишлей ял тăрăхĕн пуçлăхне Я.В.Кушева район ертӳçин Тав хучĕпе тата хаклă парнепе хавхалантарчĕç. Кăрмăшсем, Ишлейсем, Шĕнерпуçсем техникăна хĕл каçарма йĕркеллĕ вырнаçтарса лартнишĕн наградăна тивĕçрĕç.

Акатуйра ытти наградăсем те пулчĕç. Сăмахран, ĕç сыхлавĕпе. Уявпа саламлама пынă ытти хăнасем те пушă алăпа килмен. Саламлакансен хушшинче РФ Патшалăх Думин депутачĕ А.Г.Аксаков, ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ Г.Г.Васильев, ЧР çар комиссарĕ А.Б.Кухарчук тата ыттисем пулчĕç.

**В.ЭВЕРККИ.**

## КИЛТЕ ТУНИ ТЕ ПАХА

Апат-çимĕçпе промышленноç таварĕсемсĕр пуçне килте туса илнĕ продукцие



✵ **Акă вĕсем, алă ĕçне пĕлекенсем.**

сĕнекенсем те сахал мар пулчĕç Акатуйра. Акă Александра Петровапа (Урай-Макаç) Римма Павлова (Тутаркасси) хăйсен аллипе хăва хуллинчен ăсталанă карçынккапа креслосем сутатчĕç. «Эпир пасартинчен чылай йӳнĕрех ыйтатпăр»,- теççĕ кинемисем. Ултă теçеткене яхăн çак ăсталăха туптанăскерсен ĕçĕсем питех те шеп пулни пирки иртсе каякан та, туянас шухăшли те ырă сăмах каламасăр пăрăнмарĕ.

Çав тĕлтех Урай Макаçри Валентина Макаровапа та сăмах



✵ **Вăйлисем кĕрешӳре палăрчĕç.**

пуçартăмăр - хурт-хăмăр продукцийĕ тата тĕрĕллĕ ӳкерчĕксем сутлăха тăратнă. Сĕтел çинче пылшăн «Пысăк пахалăхлă продукци» тивĕçнĕ ятпа илнĕ РФ тата ЧРн тĕрлĕ степеньлĕ дипломĕсемпе паллашма пулать. Килĕнче вĕсен утар пур.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

## ПАТТĂРСЕМ ТУПĂШРĔÇ

Мĕнле ирттĕр вăл Акатуй спорт вăййисемсĕр? Унăн сĕмне кĕртекенсем - уяв паттăрĕсем-çке. Вăл ята тивĕçес тесен вара пуринчен те тавçăруллăрах, чеерех, маттуртарах, чи кирли вара - вăйлăрах пулмалла. Кăçал уява килнисенчен 180-шĕ 10 спорт енĕпе хăйсен пултарулăхне тĕрĕслерĕ. Паллă ĕнтĕ, пур спорт вăййисем те «Хĕвеллĕ-1» уçланкăра иртрĕç.

Уявра **сĕтел çинче теннисла вылясси** йăлана кĕчĕ. Кунта 15-ĕн тĕп призшăн тупăшрĕç. Темле пулсан та, çĕнтерӳçĕ пĕрре-çке. Кӳкеçри лицейре физкультура урокне ирттерекен Андрей Красныха теннис вăййинче профессионал тесен те йăнăш пулмĕ. Курма пынисем сиссе те юлаймаççĕ - Андрея хирĕç ăмăртакан выляса та янă. Сăмах май, А.Красных пĕлтĕр те Акатуйран 1-мĕш вырăнпа килне кайнăччĕ. Тĕп парне - чĕрĕ автан - тыттарни каллех вăл çĕнтерӳçĕ пулнине ĕнентерчĕ.

Хальхинче **вĕрен туртасси** те хăй йĕри-тавра çынсене самай пухрĕ. Пурте пĕрле пĕр çын пек пулсан çеç хирĕç вылякана туртса илме пулать. Çак мелпе усă курчĕ те çамрăксен пĕр ушкăнĕ.

Кӳкеçри спорт шкулне çӳрекенсенчен ну-



✵ **Шахматистсем пуç ватаççĕ.**

майăшĕ ĕçпе юрă уявĕнче призлă вырăнсене йышăннине те палăртмалла. Акă А.Н.Николаев тренер хатĕрлекен хĕрсем **волейболла** пуринчен те ăста вылярĕç. Арçынсенчен вара Кӳкеçре пурăнакансенчен йĕркеленнĕ команда çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ. Владимир Яковлев, Алексей Никитин, Дмитрий Селезнев пляж волейболĕн йĕркипе пурне те парăнтарчĕç. Тар тăкмалăх призĕ те сумлă - чĕрĕ така.

**Шалча тăрăх хăпарасси** те пурин те чаплă пулмасть иккен. Пĕрисен ăсталăх çитмест, теприсен ала вăйĕ сахалтарах. Ниме пăхмасăр - ал-урана чĕртерсе яни, çӳле кармашса çитнĕ чухне çурри таран шуса анни тата ытти те - тӳпенелле хăвăрт талпăнакана приз пулатех. Кăçал, çитменнине шалчин тăршшĕ те пĕлтĕрхинчен пысăкрах пулчĕ.



✵ **Волейболра та ăсталăх кирлĕ.**

**Шахмат, кире пуканĕ йăтасси, армспорт, тултарнă михĕсемпе çапăçасси** те хăйсене майлă интереслĕ, хĕрӳ иртрĕç. Ку вăйăсемпе 42 çынран 15 участникĕ парнеллĕ пулчĕ.

**Кĕрешекенсен кавирĕ** çак кун килнисенчен çурри ытла çынна хăй патне тыткăнларĕ. Хальхинче абсолютлă виçепе вăй виçрĕç спортсменсем. 8 пăхаттир - пурте хăйсене кура вăйлă. Иккĕшĕ вара - Шупашкар хулинче пурăнакан Андрей Фомин тата пирĕн ентеш Дмитрий Григорьев - Раççей спорт мастерĕсем.

Шăпах иккĕшĕн хушшинче финалта хĕрӳ самант пулчĕ те. Шел, хальхинче приз - чĕрĕ така - хамăр районта юлмарĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ А.П. Князев ăна хăнана, А.Фомина тыттарчĕ. Апла пулин те Акатуя килнисем чăн-чăн профессионалсен тупăшăвне курса киленме пултарчĕç. Сывлăх, вăй пулсан килес çул пирĕн ентешсем ку парнене хамăр патăмăртах хăварĕç.

**Виçĕ енлĕ кĕрешессине** (троеборье)



✵ **Лашасен вальсĕ.**

те Шупашкартан килнĕ пĕтĕм тĕнче класлă спорт мастерĕ Иван Калля хутшăнчĕ. Анчах çĕнтерӳçĕ пулма ăна хамăр ентеш, Раççей спорт мастерĕ Эдуард Гаврилов, чăрмантарчĕ. Телей кайăкĕ кунта пирĕн çийĕн вĕçрĕ тейĕнех - В.Ф.Кисунин тренер-преподаватель воспитанникĕ такана пуç çийĕн йăтсан Эдикпе пĕрлех пурте савăнчĕç. Акă ăçта вĕсем, Акатуй паттăрĕсем.

**А.СУСМЕТ.**

## ЛАША СПОРЧĔ АТАЛАНАТЬ

Лаша спорчĕ Акатуй хăнисене «Хĕвеллĕ-2» уçланкăна пуçтарчĕ. Качча каймалли шур кĕпеллĕ пикесем чипер ут çине утланса çӳрени, лашасем вальс çеммипе çаврăнни лаша спортне кăмăллакансен йышне ӳстерме пулăшрĕç. Ăмăртусем пуçланиччен ЧР Физкультурăпа спорт министерствин лаша спорт шкулĕн çамрăкĕсем кăтартуллă тухрĕç. Вĕсем хушшинче - спорт мастерĕн кандидатне илме тивĕç юланутçăсем те пур. Ташă хыççăн урхамахсен тĕрлĕ чăрмавсене çĕнме тиврĕ.

**Юрха лашасемпе** чупассине курма килекенсем кăмăлтан пăхрĕç. Пĕрремĕш чупура район ертӳçин Орлик лашипе, тытса пыраканĕ Евгений Князев, «Гвардеец» предприятирен килнĕ Андрей Моисеевăн Флагĕ тупăшрĕç. Иккĕмĕшĕнче лаша спортшкулĕн директорĕ Валерий Краснов Бамончĕпе Кадыков хуçалăхĕнчи Александр Ильинăн Палачĕ ăмăртрĕç. Хăйсен кĕрешĕвĕнче Флаг 3:02, Бамонд 2:02 вăхăтпа мала тухрĕç.

Лаша спорчĕн тепĕр пайĕ - **утланса чупасси** - ыттисенчен кăсăксăр иртмерĕ. Çурма ăратлă лашасенчен спорт-шкул воспитанникĕ Артем Артемов Хлопотунькăна мала кăларчĕ.

**Колхоз лашисем** хушшинче Кадыков ячĕллĕ хуçалăхран килнĕ Забродинсем, ашшĕпе икĕ ывăлĕ, хăйсен хушшинче тупăшрĕç. Валентин Забродин ашшĕне 0,3 çеккунт кая хăварса Татьянкăпа 1-мĕш вырăна тухрĕ. Парне телевизор çĕнсе илчĕ.

Пур лашан та 3200 метра парăнтарма тиврĕ. Ăмăртусем пуçланас умĕн Анатолий Князев районти хуçалăхсенче республика шайĕнчи мероприятисене хутшăнма юрăхлă лашасем пуррине палăртрĕ. Вĕсене картара тăратни кăна, паллах, çителĕксĕр, кунсеренех тенĕ пек тренировка кирлĕ. Шел те, хальлĕхе хамăр лашасем пирки ака-суха ĕçченĕн уявĕнче çеç илтетпĕр. Апла пулсан Акатуйра лашасен ăмăртăвне йĕркелени районта çак спорта аталантарма май туса паниех.

**А.ИЗМАН.**

**В.Сорокин, А.Изман, И.Васильева фото ӳкерчĕкĕсем.**

# ТĂРĂНСЕН ТЕ ТĔСЛĔХ БИБЛИОТЕКА

**Çыннăн чи пысăк пуянлăхĕ вăл ĕлĕкрен ăс-хакăл, кăмăл-сипет шутланнă. Çитĕнекен ăру ăна кĕнеке вуланипе ытларах аталантарать. Писательсем кĕнеке пĕлтерĕшне пысăка хунă. Авалах вулама-çырма вĕренме сĕннĕ.**

Çак кунсенче Вăрманкас Тăрăнта вырнаçнă вулавăша вĕренекенсемпе вĕрентекенсем, ашшĕ-амăшĕ, районти библиотекарьсем, хăнасем, ял çыннисем пуçтарăнчĕç. Савăнăçлă лару-тăрура Чăрăшкасси ял тăрăх пуçлăхĕ В.Я.Павлов сăмах илчĕ, малашне пирĕн библиотека модельлисен шутне кĕрессине пĕлтерчĕ. Çав ятпа саламларĕ, телефон парнелерĕ.

Районти библиотека директорĕ Е.С.Васильева вулавăша çĕнĕ йышши телевизор, компьютер, видеомагнитофон вырнаçтарнине пĕлтерчĕ. Шкул ачисене валли пур предметпа та видеокассетăсем, дисксем пуррине палăртрĕ. «Çакăнтах учительсем урок та ирттерме пултараççĕ,- терĕ Елена Сергеевна. - Районта сирĕн библиотека модельлĕ ята вунпĕрмĕш тивĕçрĕ. Кĕнекесем те çителĕклех пулмалла, пурĕ 120 пин тенкĕлĕх туянса пама пулнă». Пуш алăпа килмен, чей савăчĕн пуххипе савăнтарчĕ. Райадминистраци специалисчĕ Т.В.Ишмуратова та ачасене тата лайăхрах вĕренме, ытларах информаци илме лайăх майсем пулнине каларĕ, «Астăвăм» кĕнеке илсе килнĕ.

Пирĕн ентеш Анаткас Тăрăнта çуралса ӳснĕ, халĕ Çĕрпӳ хулинче пурăнакан В.Н.Николаев калаçăвне те пурте тимлĕ итлерĕç. Вăл ял-йыш, тăвансен, тăван çĕр историйĕпе интересленет. «Пăлхавçăсем», «Икĕ кăвакарчăн» кĕнекесен авторĕ. Юрă-кĕвĕпе те туслă, вĕсене хăех кĕвĕлет, баянпа вылять. Юрăсен пуххи те парне пулчĕ. Вăл шкулта ачасене вĕрентнĕ, халĕ пенсире. Вырăнти ял тăрăхĕн çумĕнчи хĕрарăмсен канашĕн председателĕ те, çак йĕркесен авторĕ, тухса калаçрĕ, кĕнеке пурнăçра мĕнле вырăн йышăнни çинче чарăнса тăчĕ, ачалăхра библиотекăпа çыхăннă самантсене аса илчĕ, çак вулавăша шăпах пирĕн патра уçма мехел çитернĕшĕн пурне те тав турĕ.

Пĕтĕмпе вулавăшра ултă пин çурă тĕрлĕ литература, вăл шутран чăвашли икĕ пине яхăн.

Вулакансен йышĕ çулсеренех пилĕк çĕртен иртет. Куллен çӳрекенсем те йышлă. Пĕлӳ тĕнчине çул яланах уçă. Хаçат-журналсенчен Калиса Викторова библиотекарь чи малтан «Тăван Ен», «Хыпар» хаçатсене асăнчĕ, ытти кăларăмсем те пур, пурĕ вун саккăр. Библиотека малашне ытларах халăхпа тачă çыхăнса уяв каçĕсем, кану вăхăчĕсем ирттерме çĕнĕ кĕнекесемпе паллаштарма, вĕренекенсене ытларах пулăшма шантарать.

**А.ЕФИМОВА, ВăрманкасТăрăн ялĕ.**

# САДРА-ПАХЧАРА

Эсир мĕнле те, эпĕ кăçал пахча çине алă султăм. Каяс та мар, çÿрес те мар, лартас та мар терĕм. Кахал? Эпĕ-и? Пачах кахал мар, мĕншĕн тесен ялта ÿссе çитĕннĕ. Пире пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарнă. Эпĕ халь пурнăç çине «реальнă» пăхма пуçларăм, хăш-пĕрисем пек.

Пахчи пирĕн Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнче вырнаçнă. Унта пĕрре кайса килме утмăл тенкĕ тухса каять. Пĕччен ĕçленин усси çук, хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ. Пăрчăкан пек вĕтеленетĕп, те йăран чавас, те çĕр улми лартас? Çемйипе кайса килме 180 тенкĕ! Вăл укçапа пасара кайсан... Хăярне çаратаççĕ, купăстине вăрлаççĕ. Çăвĕпе шăварса çитентеретĕн çеç, тепре килнĕ çĕре купăста кучанĕсем салхуллăн кăнтарса лараççĕ.

Кăçал аппаланас та теменччĕ. Çуркунне çитрĕ, пурте чупкалаççĕ, кĕреçесемпе витресем çĕкленĕ. Камсем? Пенсионерсем, паллах. Ăш вăркама пуçларĕ. Сухан та пулин кайса лартас терĕм, унсăрăн мăян ÿсĕ, вăрман пек кашласа ларĕ. Ах!.. Ĕненетĕр-и? Пырса кĕтĕм - шак хытрăм. Ман пахча хуп-хура выртать. Сухаласа пăрахнă такам. Темле ырă чун тупăннă ман тĕле. Ирĕксĕрех çĕр улми лартмалла пулчĕ вĕт. Сухаланă çĕре епле нимсĕр хăварăн? Вăрлăхĕ çукрахчĕ те - унтан-кунтан пуçтаркаласа, яшкана янă чухнехи пек тураса (вăрлăхĕ çитмесрен хăраса) ларткаласа ятăм. Пĕр сăмахпа, пахчана хуратса хăвартăмăр. Чунра çăмăл пулсах кайрĕ. Эпир, чăвашсем, ĕлĕкрен ĕçе хăнăхнăскерсем, ĕçсĕр пурăнма пултараймастпăрах ĕнтĕ.

Мĕн тетĕр? Тепре кайнă çĕре ман пахча тавра тытнă тимĕр карта çуккă. Те çĕрне сухаласа панăшăн çаратса кайнă, те пĕрпĕр ÿсĕр эрехле сутса ĕçнĕ пирĕн картана? Çухатаканăн çĕр çылăх теççĕ, ăна çирĕплетме пултараймастăп. Çакна çеç калама пултаратăп: халь ĕнтĕ йытти-кушакки, ĕни, качаки - пурте ман пахчара ыр курса пурăнĕç.

**Лидия САРИНЕ.**

# *ПĔТĔМЛЕТŸ - ПОХОДРА*

Яланхи ырă йăлапа ачасем вĕренÿ çулĕ вĕçленес умĕн ялтан инçех мар вырнаçнă вăрмана васкарĕç. Çунатлă туссем хăнасене чĕвĕл-чĕвĕл юрăпа кĕтсе илчĕç. Кунта пĕрремĕш хут мар килеççĕ вĕренекенсем, кăнтăр апачĕ хатĕрлемелли вырăн (кашни класăн) та тĕрĕс тĕкелех, малтанхисемех. Кĕçех, тутлă шăршă таврана сарăлчĕ. Акă пурте «ярмарккăна» пухăнчĕç. Успанка, кашни енне тĕрлĕрен станцисем йĕркеленĕ, пĕринче спорт ăйăйисен конкурсĕ иртет, тепринче кĕвĕ-çемĕ, ташă юратакансем пуçтарăннă, виççĕмĕшĕсем ÿсен-тăран тĕнчине тĕпчеççĕ. Кашнинех хăш енпе те пулин хăй пултарулăхне кăтартма май пур. Чи хастаррисем, чи тавракурăмлисемпе вăйлисем, тавçăруллисемпе сцена ăстисем укçа ĕçлесе илеççĕ. Кунтах буфет пур. Укçи, паллах, шкул пичечĕллĕскер кăна-ха, канфет-премĕкĕ вара - чăннех. Ачасем кăна мар, авă кĕçĕннисене вĕрентекен Галина Николаевна та такмакласа ташша яра пачĕ, пылак парнене тивĕç пулчĕ.

Пĕр самант пурте шăпланчĕç, хĕл каçмалăх серте тимлесе пуçтарчĕç: киле пушăлла каяс мар терĕç.

Физкультура вĕрентекен Альбина Филимоновна икĕ ушкăнпа савăнăçлă стартсем йĕркелерĕ. Çамрăк спортсменсен мĕнле кăна кăткăс ĕçсене пурнăçлама лекмерĕ-ши! Эрешменле хăпарчĕç, тараканла чупрĕç, çĕленле шурĕç, шапалла сикрĕç.

«Серте» командăна Алеша Викторов, Сергей Григорьев «Вĕлтрен» ушкăна ертсе пычĕç, хăйсене шанса панă ăмăртăва аван вĕçлерĕç.

Юлашкинчен линейкăра лайăх вĕренекенсене Хисеп грамотисемпе чысларĕç. Пĕр кун сиктермесĕр шкула çÿрекенсене - вĕсем пуçламăш классенче ытларах - парнесемпе хавхалантарчĕç.

- Татах килĕр!- тесе каланăн туйăнчĕ ем-ешĕл вăрман кашлавĕ тулли кăмăлпа килсене пуçтарăннăскерсене.

**А.ЕФИМОВА,Тăрăн шкулĕ.**

✵ **Япăх хыпарсем**

## УРАЛАНАКАН КОСТРЮЛЬСЕМ

**Çу çитсен йывăç-курăк ешерет кăна мар, вăрă-хурах та çĕрне-кунне тиркемесĕр ытларах алхасать. Районти ШЕПĕн сводкинче унта та кунта тĕрлĕ тĕслĕ металл çаратни çинчен пĕлтереççĕ.**

Майăн 24-мĕшĕнче çапла Çатракассинчи Муликовсен çуртне чÿрече кăларса С. кĕнĕ, унтан алюмини кастрюль, чукун çатма вăрласа тухнă.

Иртнĕ эрнере Шĕнерпуçĕнчи Лукинсен мунчине кĕтмен хăна килнĕ. Паллă мар çын 40 тата 100 литрлă чукун хурансене кăларса кайнă.

Иртнĕ эрне кун тĕлне Шемшерте пурăнакан Краснова вăрăсенчен хур тÿсет. Фляга, пĕчĕк чукун, алюмини кастрюль, тăкакĕ пурĕ 2300 тенкĕлĕх, ирпе тăнă çĕре «ураланнă».

Илпешри Захаров патне те çитеççĕ тĕслĕ металл юратакансем. Иртнĕ вырсарни кун кунапалама пуçланă çурт умĕнчен алюмини листасем «çук» пулаççĕ.

Кивçурткассинчи Лукинсем патне кукăр алăлли ирĕккĕнех кĕрсе 50 литрлă флягăсăр тăратса хăварать.

Июнĕн 2-мĕшĕнче каçхи тăхăр сехет çурăсенче «Шырав» ушкăн Кÿкеçре тĕрлĕ тĕслĕ металл йăтса утакан икĕ çамрăка тытса чарнă. Ку ĕçпе çийĕнчех тĕпчев пуçарнă.

## ДАЧА ИСТОРИЙĔСЕМ

Шупашкарта пурăнакан пĕр инке хĕл каçнă хыççăн Мамкаялĕ çумĕнчи «Рябинушка» коллектив садĕнчи дачине çитет. Анчах чун каниччен ĕçлес вырăнне ăш хыпиччен тарăхмалли килсе тухать. Вăрă-хурахсем дача çурчĕн алăкне ватнă. 50 литрлă дюралюмини пичке, 4 гардина, çатмасем йăкăртса тухса кайнă.

Кÿкеç патĕнчи «Дружба» коллектив садĕнчи Смирнован дачи тăррине икĕ çамрăк мĕн тĕллевпе хăпарса кайнине следовательсене каласа парĕç. Вулакана пĕлтерем: тăрă алюмини листаллă пулнă-мĕн, ăна вăрăсем хăйпăтма тапратнă. Çапла Кÿкеç йĕкĕчĕсене милици сотрудникĕсем алăранах ярса илнĕ.

## ХУÇАЛĂХСЕМ ШАР КУРАÇÇĔ

Мĕн çаратса услам тумаллине вĕренсе çитнĕ вăрăсем иртнĕ эрнесенче ял хуçалăхĕсене те самай шар кăтартрĕç.

Майăн 24-мĕшĕ тĕлне Ишлей станцийĕнчи АБЗ территорийĕнче напряжени айĕнчи электрокабель 45 метр çухалнă. Тăкакĕ 40500 тенкĕпе танлашнă. Çав каçах «Искра» ял хуçалăхĕ те пăралук сăтăрçисенчен хур курать. Шуркассипе Чăрăшкасси ялĕсем çумĕнчи вунă юпа хушши (кашни хушă 50 метр) виçĕ пăралуклă электропередача линийĕсене татса кайнă.

Майăн 31-мĕшĕнче палламан çынсем Кивçурткасси патĕнчен Шĕнерпуçĕнчи АТС патне тăсăлакан кабеле 250 метр тăршшĕ касса кайнă.

Иртнĕ уйăх вĕçĕнче палламан çынсем «Атăл» ЯХПК сысна фермине чÿрече вырăнне полиэтилен пленка карнине касса кĕнĕ. Виçĕ сысна çури, пурĕ 3500 тенкĕлĕх, тăкак кÿнĕ.

## ВИЛМЕЛЛЕХ ХĔНЕНĔ

Пĕрле ĕçеççĕ-çиеççĕ, юлашкинчен çапăçса каяççĕ. Час-часах çапла вĕçленет ĕçкĕ-çикĕ. Тепĕр чухне татах та хăрушăрах, пĕри теприне вилмеллех амантни те тĕл пулать.

Майăн 26-мĕшĕнче икĕ çамрăк Кÿкеçре тĕл пулаççĕ, эрех ĕçеççĕ. Ÿсĕрпе çакскерсен темĕн пайламалли килсе тухать. Пĕри кĕленчепе теприне çапать. Иккассинче пурăнакан 26-ри Анатолий Якимова районти тĕп больницăна леçеççĕ. Реанимаци уйрăмĕнче пилĕк кун выртнă хыççăн каччă вилсе каять.

## ТĂВАН ХĔРНЕ МĂШКĂЛЛАНĂ

Çав тери хăрушă, тискер ĕç пулса иртни çинчен пĕлтерет районти ШЕПĕн оперативлă сводки. Хыркасси ялĕнчи К. хăйĕн сакăр çулхи хĕрне килĕнчех мăшкăлланă. Халĕ ку енпе уголовнăй ĕç пуçарас пирки татса параççĕ.

**А.ИЗМАН.**

Предполагается проектирование и строительство блочной котельной в д.Сятракасы. Справки по тел: 8(240) 2-16-01, 69-40-08.

*Продаю: пиломатериал хвоя. Дешево. Цены от 1300 руб за 1 $м^3$. Срубы, любой размер на заказ. Тел. 2-22-17; 2-38-66; 67-68-19.*

Участник долевой собственности на землепользование СПК - к-з «Пучах» Чебоксарского района Щербаков Константин Алексеевич - 0,48 га сообщает о своем намерении выделить земельный участок в поле № 6, расположенный рядом с деревней Пархикасы под огород. Возражения направить в месячный срок по адресу: поселок Кугеси, ул.Шоссейная, дом 9.

Собственники земельных долей Н.П.Семенов, П.Е.Семенов с общей площадью 1,47 га сообщают о своем намерении выделить земельный участок в поле № 4, четвертый овощекормовой севооборот недалеко от д.Микши-Энзей.

Свои возражения просим присылать в течение месяца по адресу: п.Кугеси, ул.Шоссейная, 15.

# ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРŸСЕМ

☎ 2-13-80

Администрация Шинерпосинского сельского поселения предоставляет в аренду для огородничества сроком на 11 месяцев земельный участок площадью 0,1516 га, расположенный по адресу: д.Большой Чигирь, ул.Новая с кадастровым номером 21:21:18 02 05: 0042 (земли поселений).

Совет Кугесьского райпо извещает о том, что с 29 мая по 25 июня 2006 года начинается перерегистрация пайщиков Кугесьского райпо. Просим пайщиков обратиться к доверенным лицам-завмагазинам деревень или в офис райпо по адресу: п.Кугеси, ул.Советская,4а. При себе иметь паевые книжки. Не прошедшие перерегистрацию будут автоматически исключены из состава пайщиков райпо согласно постановлению собрания уполномоченных Кугесьского райпо от 16.02.2006 г.

Предполагается предоставление в собственность за плату земельных участков площадью по 0,10 га с кадастровыми номерами 21:21:07 01 05 : 0058, 21:21:07 01 05: 0059 (земли поселений) для огородничества, расположенного по адресу: Чувашская республика, Чебоксарский район, с.Синьялы, ул.Мельничная.

***Утерянный аттестат № А 7239854, выданный 23 июня 2001 г. Кугесьским лицеем на имя Григорьевой Алины Алексеевны, считать недействительным.***

Собственники земельных долей Виноградов Тимофей Константинович, Виноградова Ольга Георгиевна, проживающие в с. Хыркасы, Сюктерский проезд, д.4 кв.2, Сидоров Вячеслав Поликарпович, Сидорова Надежда Константиновна, проживающие в деревне Кибечкасы, ул.Елочная, д.9, сообщают о намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользователя СХПК «Атăл» Чебоксарского района в счет долей по 1,47 га пашни в поле №3 второго полевого севооборота юго-западнее деревни Кибечкасы. Выделяемый участок не превышает среднекадастровую оценку, поэтому компенсация не предусматривается. Свои возражения направить письменно в месячный срок по адресу: п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.

Собственница земельной доли Михайлова Т.В. сообщает о своем намерении выделиться из земель СХПК «Сад» Чебоксарского района в счет доли 2,17 га пашни в поле №3 возле д.М.Янгильдино с южной стороны. Возражения просим прислать в течении месяца: п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15.

Собственник земельной доли СПК-колхоз «Пучах» Трофимов В.М. сообщает о намерении выделиться в поле №1 восточнее д.Синьял-Покровское площадью 1,88 га. Свои возражения направить по адресу: п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15.

Предполагается предоставление в аренду земельного участка площадью 0,15 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, с.Хыркасы (земли поселений) сроком 11 месяцев для ведения ЛПХ. Адрес: с.Хыркасы, ул.Ресторанная, д.4. Администрация Вурман-Сюктерского сельского поселения.

***Продаю корову, 1 отел, черно-белой породы. Тел.: 35-4-55, 8-903-063-68-75.***

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» № 49-50 от 6 мая 2006 года в объявлении, поданном от имени долевиков Сармосовой и Ефремова прошла неточность. Вместо «3,86 га» надо «по 1,88 га на каждого в поле №1 первого полевого севооборота справа от ФХ Даниловой О.А.».

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» от 25 марта 2006 г. в объявлении о долевой собственности на землепользование СПК-колхоз «Пучах» следует читать: Терентьев Г.П. площадью 1,88 га; Терентьева Э.С.- 1,88 га; Мочалов В.М. - 1,88 га; Мочалова Г.П. - 1,88 га; Мочалов В. М.-0,97 га в поле № 1.

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» № 27 от 15 марта 2006 года в объявлении о долевой собственности на имя Ефремовой С.Н. прошла неточность. Вместо «поле №3» следует читать «поле № 5 второго полевого севооборота площадью 1,88 га (пашня) со следующим ориентиром: участок непосредственно примыкает к фермерскому хозяйству «Мечта» Соколовой О.Г. со стороны д.Хозандайкино».

* * *

Администрация Чебоксарского района выражает глубокое соболезнование родным и близким в связи с тяжелой утратой - безвременной кончиной

**Владимира Михайловича ДОЛГОВА**

начальника отделения государственного пожарного надзора по Чебоксарскому району.

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» выражает глубокое соболезнование медицинской сестре поликлиники Якимовой Ариадне Николаевне в связи с трагической смертью мужа

**Анатолия Юрьевича ЯКИМОВА.**

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: tavan.ru.@mail.ru; gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП “Кугесьский издательский дом”. Тел.2-13-83.

Дежурный по номеру: В.Т.ИВАНОВА

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 6.06.2006 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 1815. Заказ № 524.
Индекс газеты - 54820.